УПИ — 700 ҪУЛТА

Хăçан йĕркеленнĕ-ха Упи?

Камсем пуçласа янă-ха Упи ялне? Кун пирки халăхра тĕрлĕ халап çурет. Вĕсенчен пĕрне, «Упи —паттăр» тенине, ЧПУ студенчĕ Ю. Борисов 1979 çултах çырса илнĕ. Вăл Упи ялĕнче çуралса ўснĕ, халĕ — «Ял пурнăçĕ» райхаçат редакторăн çумĕ— явапла секретарĕ.

«Ватă çынсем каласа панă тăрăх, — тенĕ халапра,—XIV ĕмĕрччен эпир пурăнакан вырăнта сĕм вăрман кашласа ларнă. Тутар-монголсем пирĕн çĕр-шыв çине çĕмĕрсе кĕнĕ хыççăн Атăлпа Чулман Атăл шывĕсем тăрăнĕнче пурăннă чăвашсем кунти вăрмана тара-тара килнĕ. XIV ĕмĕрте эпир пурăнакан вырăна Упи ятлă çын хăйĕн тăванĕсемпе тата юлташĕсемпе, хăйпе туслă пурăнакан çывăх çыннисемпе Чулман Атăл енчен тарса Çавал тăрăхĕнчи сĕм вăрман уçланкине яланлăхах вырнаçса пурăнма тытăннă, тет. Упе çав три вăйлă пулнă, тет. Вăл хăй пĕчченех вăрманта упасене тытма пултарнă, тет. Малтанхи Упе ячĕ вăл ашшĕ-амăшĕсем хунă ят пулнă, тĕне кĕмен чăваш ячĕ пулнă. Упепе тавлашма хăранă ку тăрăхра пурăнакан çынсем, ăна хисепленĕ. Вăл хăйĕн çыннисене айăплама пултарнă, инкек-синкек пуласран хăтарнă, вĕсемшĕн тăрăшнă.

Çапла вара Упе ушкăн хуçа пулса тăнă. Тепле тарса пурăннă пулсан та, тутарсем ăна шыраса тупнă. Тутарсен хакимĕ Упе ятлă çынна мăрса пулма уйăрса лартасшăн пулнă. Çав тери нуша курнă Упе. Вăл мăрса пуласшăн пулман. Анчах мĕн тăвăн, хăйĕн пĕртен-пĕр ывăлне мăрса пулма лартнă. Упе ывăлĕ Ян мăрса пулса ĕçлеме килĕшнĕ. Каярахпа Уперен Упи пулса тăнă... Упи ывăлĕн Ян мăрсан 4 ывăл пулнă, тет. Хăй вилес умĕн 4 ывăлне те мăрса пулма хушса хăварнă, тет. Вăл тăватă ывăлне те Ян ятлă хунă, тет».

Çакнашкал халапсене Ю. Петров 1959 çулта, А. Филиппова —1970, В. Кондратьев—1972, В. Порфирьевпа А. Яковлев 1975 çулсенче çырса илнĕ. Чăвашсен паллă профессорĕн В. Д. Димитриевăн та хăйĕн «Чувашские исторические предания» кĕнекинче Упи çинчен ăшшăн каланă вырăн пур.

Паллă историк, профессор В. Д. Димитриев Упи йăхĕ чăваш этносĕн чи паллă йăхĕсенчен пĕри пулнине палăртать. «Село Убеево (Упи), расположенное в бассейне реки Большого Цивиля в Красноармейском районе, согласно преданиям, основано еще в XIV веке чувашами покинувшими З а к а м ь е из-за монголо-татарских разорений...».

Пăлхар тăрăхĕнчен куçса килнĕ çынсем, хăйсен мухтавлă çыннисен ячĕсене, сăваплă вырăнĕсене хисеплесе, кунти çырма-çатрана та унти ятсене панă. Çапла вара пирĕн енче Валем, Вани хуçасен, Шетме (Шетмĕ вырăнне), Хĕрлĕ çыр ятсем куçса килнĕ.

Чулман Атăл (Кама) тăрăхĕнчи Хĕрлĕ çыр тенипе çĕнĕ ял çывăхĕнчи çырмана çакнашкал ят панă. Чăваш халăх писателĕ Юхма Мишши вара Упи ялĕ XIII ĕмĕртех йĕркеленсе кайнă тесе шутлать. Вăл Упи çар пуçлăхĕ Атăл çи Пăлхарти Ылтăнпик патшан чи çывăх тымарĕнчен тухнă, тет. Ку шухăшпа эпĕ те килĕшетĕп.

Упи ялĕ хальхи Кĕрекаç çывăхне вырнаçнă пулнă. Вилнисене «Пăла ху» текен çўллĕрех вырăна пăлхар йăли-йĕркипе тата йышлăн пытарни, çынсем кунта тĕпленсе пурăннине çирĕплетеççĕ. Вуншар çул иртнĕ. Анчах пĕр-ик ĕмĕр хушшинче тутар-монголсем Упи çыннисене шыраса тупнă. Вĕсене куланай-хырçă тўлеттерме пуçланă. Упи ывăлне, хăй килĕшмен пулин те, ăна хисепленине кура ял-йыш мăрсана лартнă. Каярахпа унăн тăватă ывăлне те çакнашкал шăпах кĕтнĕ.

Çуркунне Çавал сарăлса çыранран тухса кайни çынсене сахал мар инкек кăтартнă. Çитменнине тата çывăхри ял хресченĕсем çĕршĕн час-часах çапăçни уписене килĕшмен. Вĕсем Çавалăн тепĕр енне, çўллĕрех вырăна куçса ларма килĕшсе татăлнă. Упи— паттăр пуçарса янă яла Мăн Упи, каярахпа Чиркўллĕ Упи, Çавалкас Упи тенĕ. Ку тăрăхрах Çĕньял Упи, Малти Трак — Малти Упи—Начар Упи, Вăтакас Трак, Кайри Трак, Тури Кушар, Анат Кушар, Кивĕ Йĕкĕт, Çĕнĕ Йĕкĕт, Мамça Упи, Турхан Упи, Чаканар, Янкас, Хĕлеç, Янмурçи — Четверти, Упи — Çинçе Кĕпер Упи, Тусай, Шăмар, Кĕрекаç, Çурткас Упи ялĕсем пулса кайнă. Каярахпа Уписене ку тăрăхра тăвăр пулса çитет. Тусайпа Янмăрса çыннисене «Пушă уй» çывăхĕнчи çĕрсене уйăрса параççĕ.

Акă мĕнле çырнă кун пирки В. Д. Димитриев профессор хăйĕн «Чувашские исторические предания» кĕнекинче: «В 1621—22 году чуваши деревень «Янмурзино», «Досаево» Убеевской волости Цивильского уезда оформили на оброк 1200 десятин (1 теçеттин—1,09 га) пашни и 400 десятин сенокоса в бассейне Большой Булы, речек Юхмы и Оборжи. Позднее, как видно из Цивильского перечневого списка Аранзбекова 1650—51 года, здесь получили за службу и на шестирублевый оброк 300 десятин сенокоса 30 служащих чувашей Убеевской волости», тенĕ.

Çак чăвашсем вара хăйсене уйăрса панă çĕр çине хăйсен тăванĕсемпе, кил-йышĕпе куçса каяççĕ. Кунти пуçарса янă ялне киввипе çыхăнтарса параççĕ: Çĕнĕ Упи. Пурăна киле унти чăвашсем Юхма Упи, Начар Упи, Мишер Упи, Кивĕ Упи, Турхан Упи ялĕсене пуçарса янă. Тутар Республикинчи Çĕпрел районĕнче те Кивĕ, Пĕчĕк, Тутар тата Çĕньял Упи ятпа çўрекен ялсем пур.

Çапла, Упи—паттăр çыннисем пирĕн тăрăха XIII ĕмĕр пуçламăшĕнчех килсе вырнаçнă. Апла пулсан, Упи ялĕ йĕркеленнĕренпе кăçал 700 çул çитрĕ.

Вĕсемпе мухтанатпăр

Ялти Иван Никифоровичпа чăвашсем чăннипех мухтанаççĕ. Вăл — паллă педагог-математик, хăюллă салтак, ăста лектор, лайăх кил хуçи. И. Никифоров математиксен çемье династине пуçараканĕ те. Вĕренўри тăрăшулăхшăн ентеше Социализмла Ёç Геройĕ, «РСФСР тава тивĕçлĕ учителĕ» хисеплĕ ятсем панă, Ленин орденĕпе наградăланă. Ачисемпе мăнукĕсем те унăн ĕçне суйласа илнĕ.

Яков Абрамов хресчене 1906 çулта Патшалăхăн пĕрремĕш Думине депутата суйланă. Вăл «Хыпар» хаçатăн хастар çыравçи пулнă. Депутат тăрăшнипех Упи тăрăхĕнчи хресченсен пирвайхи советне 1917 çулхи апрельтех йĕркеленĕ.

Варвара Ивановна—И. Яковлев вĕренекенĕ. Учительница малалла ăс пухать, Хусанти университетра врач пулса тăрать. В. Иванова 1925—35 çулсенче Çĕрпў уесĕнчи (унта 5 район кĕнĕ) больницăри чи ăста куç врачĕ шутланнă.

К.И. Горинăпа В. С. Спиридонов хăйсен кун-çулне педагогикăпа çыхăнтарнă. Çав хушăрах 7 ача пăхса ўстернĕ. Клавдия Ивановнана халăх СССР Верховнăй Совет депутатне (1954—58) суйланă, Ленин орденĕпе чыслана. Вăл —ЧР тава тивĕçлĕ учителĕ. Василий Спиридонович Упи вулăсĕнчи халăха вĕрентес ĕç пайне ертсе пынă. Ана «РСФСР тава тивĕçлĕ учителĕ» ят панă.

Вениаминпа Юрий Петровсем —аслăлăх çыннисемпе ăста ертўçĕсем. Вениамин Филиппович (1934—1999) Раççейри тата тĕнчери медицина академийĕсен академикĕ, Пермьри «Биомед» АОн генеральнăй директорĕнче 15 çул ĕçленĕ. Ана «Хисеп Палли» орденпа чыслана, СССР Министрсен Совечĕн премине панă. Юрий Филиппович та ветеринарипе гельмантологи академикĕ шутланать. Вăл Ивановăра ĕçлесе пурăнать, хăй ĕçĕнче — Раççейри чи ăста эксперт. Сăмах май В. Ф. тата Ю. Ф. Петровсен виçĕ ачи те наука кандидачĕсем.

Владимир Ильин ЧР паллă журналист шутланать. Пенсе тухичченех Владимир Ильич республикăри «Вестник недели» хаçата редакцилерĕ.

Ю. Иванов çамрăклах техникăна килĕштернĕ. Районти МСОри тăрăшулăхшăн ăна Ёçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, «Ёçри хастарлăхшăн» медальпе наградăланă. Чылай вăхăт Упи ял Советне ертсе пынă А. И. Миронова та çакнашкал медале тивĕçнĕ. Е. Л. Иванова—платниксен бригадирне «Хура тăпраллă мар зонăна çĕнетсе улăштарнăшăн» медаль панă.

Н. Л. Иванов—райĕçтăвком пуçлăхĕн çумĕ, халĕ МСО коллективне ертсе пырать.

С. А. Арсентьев ял хуçалăх ĕçченĕсен профсоюз райкомĕн пуçлăхĕнче, райплан председателĕнче ĕçленĕ.

З. Т. Борисов — Муркашри РОВД пуçлăхĕ. Г. П. Петрова «ЧР тава тивĕçлĕ механизаторĕ» ят панă.

А. Х. Харитонов, подполковник, Шупашкарти тинĕс-çар шкулĕн начальникĕн заместителĕ.

В. КОНСТАНТИНОВ.

Упи вулăсĕн пĕрремĕш совечĕ

Хальхинче те Уписем пуçарулăх кăтартнă. Чăваш патшалăх тĕп архивĕн документчĕсем Упи вулăсĕнчи пĕрремĕш совет 1917 çулхи апрельтех йĕркеленнине çирĕплетеççĕ. Вăл çак тăрăхри хресченсем Столыпин реформине, пуянсем ял çĕрĕсене туртса илнине хирĕç кĕрешнĕ тапхăрта чăмăртаннă.

Мартăн 14-мĕшĕнче Чаканар_ па Янкас ялĕсенчи çынсем вулăс тиекĕн Владимир Гущинăн Çавал улăхĕнчи çĕрне туртса илнĕ. Тепĕр эрнеренех Тусай тата Янмурçин хресченĕсем Петр Гиляровские Сурăм шывĕ хĕрринчи 36 теçеттин çĕрсĕр тăратса хăварнă. Унăн хуторне аркатнă. Апрель пуçламăшĕнче Ванюшкасси чухăнĕсем вăрçă çулĕсенче вулăс старшини пулнă Михаил Степановпа ялти полици десятникĕ Мирон Васильев Малти уй пуссинчи 11 теçеттин çĕре касса илме тăнине хирĕçлеççĕ, уесри çĕр йĕркелў комитетĕнчен пынă çынсене хăваласа яраççĕ. Кĕçĕн Шетмĕпе Именкасси хресченĕсем чиркў çыннисенчен ял çĕрĕсене каялла илме тăраççĕ. Пур çĕрте те тенĕ пекех хресченсем хăйсен ирĕкĕпе вăрмансене касма тапратаççĕ.

Çак лару-тăрура йĕркеленет те вулăсри хресченсен пĕрремĕш совечĕ. Ана пуçаракансенчен пĕри — Пĕрремĕш Патшалăх Думин членĕ пулнă трудовик, «Хыпар» хаçатăн штатра тăман корреспонденчĕ— Я. А. Абрамов. Вăл çине тăнипе пур ялсенче те хресченсен пухăвĕсене ирттернĕ. Вĕсем унта вулăсри совета делегатсем суйласа янă. 44 делегатран ытларах пайĕ—вăтам тата чухăн хресченсем.

Апрелĕн 12-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче хресченсен совечĕн ĕç тăвакан комитетне 9 çынна суйланă. Вĕсем çаксем:

1. Яков Абрамов —Упирен, вулăсри вак кредит кассин председателĕ.
2. Борис Львов — Шупуçĕнчен, салтак.
3. Ларион Сидоров — Кăмакалтан.
4. Никонор Зверев — Кĕçĕн Чуллăран.
5. Клементий Степанов —Ванюшкассинчен.
6. Антон Миронов —Кайри Тракран.
7. Ефим Андреев—Еншикрен.
8. Нестер Захаров—Анат Кушартан.
9. Антон Никифоров—Вăрманкасран.

Тепĕр икĕ кунтанах вулăсри советăн ĕçтăвком ларăвĕ пулнă. Председательне Я. Абрамова, секретарьне Б. Львова суйланă. Ку совета салтака суйлани тата списокра ăна ятарласа палăртни çак совета йĕркелекенсем Петроградри е Шупашкарти рабочисемпе салтаксен совечĕсем евĕр тума шутланине çирĕплетет.

Вулăсри пирвайхи совет хут пĕлменлĕхе пĕтерес, çĕнĕ пурнăç йăли-йĕркине халăх хушшине сарас тĕлĕшпе чылай вăй хунă. Анчах совет ĕçĕсем, унăн председателĕн Я. Абрамовăн пуçарăвĕсем Етĕрне уесĕн земство управипе Вăхăтлăх правительствăн унти органĕсене килĕшмен. Вĕсем ку совета пĕтерме тĕрлĕ сăлтав шыранă. Чи малтанах ăна хирĕç уесри обществăлла хăрушсăрлăх комитечĕн членĕ (хăй вулăс совечĕн членĕ шутланнă пулсан та) П. Митроновский арман хуçи тăнă. Я. Абрамов чухăн хресченсемшĕн тăрăшни, шкулсенче чăвашла вĕрентес тата чăваш учителĕсене ĕçлеттерес тени ăна курайман пуян çынсене хăйсен ĕçне урăхларах йĕркелеме май панă.

Малти Тракра майăн 30-мĕшĕнче вулăсри хресченсен пухăвĕнче вулăсри хăрушсăрлăх комитетне туса хураççĕ. Унăн членĕсем вара, малтан вулăс старшини пулнă тесе, Я. Абрамова управăн арестантсен çуртне тытса хупаççĕ. Кĕçех ăна ирĕке кăлараççĕ, апла пулин те тепĕр уйăхранах вулăс ĕçтăвкомĕн председателĕн ĕçĕсенчен хăтараççĕ.

Çапла вара Упири хресченсен пĕрремĕш совечĕ, вулăсри управăпа Вăхăтлăх правительствăн май уйăхĕнче туса хунă комитечĕпе унăн комиссарĕ ĕçлеме чăрмантарнă пулин те, 8 уйăх тытăнса тăнă. Совет патшапа пуянсем пуç пулса тăнине хирĕç пулнă. Çĕре пурне те пĕр пек валеçме тăрăшни палăрнă. Шкулсенче чăвашла вĕрентес тата наци кадрĕсем хатĕрлес ыйтусене хускатнă. Упи вулăсĕнче хресченсен çĕнĕ советне вара 1918 çулхи апрелĕн 12-мĕшĕнче туса хунă.

Уписем çинчен патша та пĕлнĕ

Пирĕн тăрăхри çынсем ĕлĕк те çĕр ĕçĕпе пурăннă. Упи [illegible] унăн тăванĕсем [illegible] хăртнă, йывăçран хуралтăсем çывăрнă. Хусан ханлăхне [illegible] тăнă тапхăрта та чăвашсенчен тĕрлĕ хырçă-ниççă [illegible] пухнă. Вырăс [illegible] те пурнăç çăмăл [illegible]. Ялсенче чир-чĕр хуçаланнă.

Хресченсем туса илнĕ тырпулăшăн, çĕршĕн, ялсем çыннисем тата ыттишĕн тĕрлĕ налук тўлеме тивнĕ. Çавăнпа ялсенче тарса çўрекенсем йышланнă. Ку ыйтăва мĕнле татса парасси пирки Çĕрпў воеводи Иван Матюшкин патша патне çыру çырнă. 1627 çулхи январĕн (кăрлачăн) 19-мĕшĕнче Михаил Федоровичран «Тин пырса çитнĕ çармăссене (вăл вăхăтра чăвашсене Ту ен мари çынни тенĕ) ясак тўлеттересси çинчен» патша грамоти çитнĕ. Унта вырăс патши 18—20 çулсенчен иртнисене кăна ясак тўлеттермелли, тĕрлĕ харкашу сиксе тухасран вĕсене вăйпа хăратмалла марри пирки аса илтернĕ.

«... И вы то делайте добро, что ищете нам прибыли прямые.—И как к вам ся наша грамот придет, и вы Цывильскому уезду Убиевские волости людей, которых вы сыскали в захребетниках, а ясаку они в нашу казну не платили, положили бы в ясак, смотря по их житью и по промыслу; а писати в ясак новоприбылых ясачных людей велели, которые в двадцать лет и больши, а меньши осминадцати лет з ясак никого писати не велели».

Патша правительстви вак халăхсене хытă тытнă. Чиркў çыннисем те служба тивĕçĕсене пурнăçласа пынишĕн укçапа руга виçине ўстерсех пынă, ял общини лайăх çĕрне касса каса илнĕ. Çакнашкал хĕсĕрлени Упи вулăсĕнче пурăнакансене те С. Разин, Е. Пугачев —«ырă патшасен» пăлхавĕсене хастар хутшăнма хистенĕ. Пирĕн енчи чăвашсем уйрăмах хамăр ентеш Искей Пайтулĕ ертсе пынă отрядра Разин майла çапăçнă. Вĕсем Çĕрпў хулине хупăрласа тăнă, Пайтула тыткăна илнĕ.